2023-2024-мĕш вĕренӳ çулĕ
Шкул шайĕнчи олимпиада
Чăваш чĕлхипе литератури (Чăваш шкулĕ)
10 класс
Ыйтусем

Олимпиада ирттермелли вăхăт – 150 минут
Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумаййи 58 балл пухма пулать

1. Вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсенчи хăш сас паллисем чăваш сăмахĕсенче тĕл пулмаççĕ? Тĕрĕс хуравшăн – 4 балл.

2. Йăнăш тупăр та тӳрлетĕр:
*Ак, ăçта, мĕнле майпа тĕл пулма тиврĕ пире, Тамара!* Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

3. Предложенире йăнăш тупăр та тӳрлетĕр, сăлтавне ăнлантарса парăр:
*Вăл ĕнтĕ çирĕм çул ытла совхозпа ертсе пырать.* Тĕрĕс хуравшăн – 6 балл.

4. *Шурă хурăнсем, яштак хырсем, лаштра юмансем, лапсăркка çăкасем, лутра шĕшкĕлĕх.* Панă сăмах майлашăвĕсене вырăсла куçарăр. Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

5. Фразеологизмсен пĕлтерĕшне ăнлантарăр:
*Куç тулли, куç усăлать,куçа хупса иличчен, куç хӳрипе пăх, куç шурри кăтарт.* Пĕтĕмпе 10 балл илсе пулать.

6. «Силпи – Пăлхар пики» сăвăлла трагедири авалхи чăваш ячĕсене çырса парăр. Хайлава кам çырнă? Ятсене çырнăшăн – 3 балл. Авторне палăртнăшăн – 2 балл. Пурĕ – 5 балл.

7.«Сывă пулар, тăванăм,
туслă пулар,
халăх ирĕкĕнчен ан тухар».
Çак йĕркесене хăш сăвăран илнĕ? Авторĕ кам? Тĕрĕс хуравшăн– 4 балл.

8. «Алран кайми аки-сухи» юрă – наци гимнĕ. *Гимн* сăмах чăвашла мĕнле куçарăнать? Тĕрĕс хуравшăн– 4 балл.

9. Пӳрне ячĕсене çырса парăр. Йĕркине пăхăнса çырнăшăн – 5 балл.

10. «Сывă пулар, тăванăм,
туслă пулар,
халăх ирĕкĕнчен ан тухар».
Çак сăмахсемпе автор мĕн каласшăн пулнă? Хăвăр шухăшăра ĕнентерсе ăслав çырăр. Кӳртĕм сăмахсемпе усă курăр. Тулли хуравшăн – 10 балл.